# КАПКĂН

№ 19. НОЯБРЬ 1939 çул

„Чăваш Коммунĕ" хаçат çумĕнче тухать





Урăх ял çынни:—Сирĕн участокра миçе агитатор ĕçлет?

Суйлав комисси членĕ:—Ĕçлеме уйăрнисем—аллă çиччĕн, уйăрмасăр ĕçлекеннисем-пĕтĕм халăх.

# АСАТТЕ ЭКСПОНАЧĔСЕМ

Пирĕн асаттене агитатора уйăрнă. „Хушнă ĕçе тумасан аван мар. Ку ĕçе, тем тесен те, пултарас çук эпĕ" тет вăл. Хăй пĕрмай агитаци ĕçне мĕнле пуçăнасси çинчен шухăшласа иртterет. Çĕрле те канлĕн çывăрми пулчĕ.

Пĕр ирхине асатте ирех тăрса ларнă. Кăвак çутă витĕр чÿречерен çара уйăх пăхать.

— Ма çывăрма пĕлместĕн, асатте?—ыйтрăм эпĕ унтан.

— Ыйăх килмест. Янкăс çуркунне пек пурнăça мухтама сăмахăмсем çитмесрен шикленетĕп,—терĕ асатте, шăрпăк çутса краççын лампипи шыранă май.

— Лампа тĕпелтеччĕ,—терĕм ăна.

— Хăйă çутма ир пуль те, çутас-ши?—ыйтрĕ манран.

— Хăйă? Хăйă мар, краççын-çке!—терĕм ăна.

— Ĕлĕк хăйă çутаттăмăр. Ача чух калама вĕренни—халь те чĕлхерен тухмасть.

Кĕçех асатте: эге!—тесе ячĕ тем аса илнипе савăнса.— Тупрăм! Аранах тупăнчĕ!

— Мĕн тупăнчĕ, асатте?

— Мĕнпе агитацилемеллине шухăшласа тупрăм. Ыранах пуçăнап. Паян япалисене хатĕрлесе хурас та, ыран ĕçе тытăнас... Мĕн пулĕ, мĕн килĕ...

* * *

Анлă клубăн аслă залĕ лăках тулнă. Суйлавçăсем пуханнă. Сцена варринче, пысăк сĕтел хушшинче асатте ларать. Ăна пионерсем сырăнса илнĕ те: «татах кала, татах кала!»—тесе кăшкăрса тăраççĕ.

— Кулаксем чухăнсен юнне мĕнле ĕмсе пурăнни çинчен каласа патăм. Çынна çын тăшман пулни çинчен калакан япаласене те кăтартса пĕтертĕм. Тата мĕн çинчен калам-ши? Ниш çинчен илтнĕши эсир?—ыйтрĕ ачасенчен асатте.

— Илтмен,—терĕç ачасем пурте пĕр харăс.

— Ача, апат-çимĕç начартан, типсе, хăрса кайсан: ачана ниш ернĕ, тетчĕç. Чăвашсем çавна çапла сиплетчĕç: амăшĕ чирлĕ ачине çăкăр кĕреçи çине хурса вĕри кăмакана висĕ хутчен чиксе кăларать. „Çак ачана кăмака нишĕ ернĕ пулсан, вăл ачаран кăмака нишĕ тухтăр", тет. Тата „тĕпсакай нишĕ тĕпсакайнех юлтăр" тесе тĕпсакайне висĕ хут чиксе кăларать; „сÿсмен нишĕ тухтăр" тесе сÿсмен витĕр висĕ хут кăларать. Унтан чирлĕ ачана çĕçĕпе чикенçи пулать, пуртăпа касанçи пулать, тылăпа тыланçи пулать. Çаксене тунă чух: „ниш чикетĕп, ниш касатăп, ниш тыллатăп", тет. Ачана сивĕ хурана ярса вучах çине çакать те хуран айне вутă хуранçи пулать...

— Ой, хăрушă!—пĕр-пĕрин куçĕнчен чăр пăхса илеççĕ итлесе тăракан пионерсем.

— Тĕлĕнмелле „медицина"!

Асатте чемоданĕнчен пĕчĕк алтăр кăларчĕ.

— Эпĕ чăвашсем пур чире те патша саманинче мĕнпе сипленине кăтартасшăн. Акă курманнисем курăр. Çак алтăр ăшне эпĕ куç чĕлхи каласа суратăп: „Турăран ырлăх пултăр, этемрен сиплĕх килтĕр. Çитмĕл çичĕ тинĕс уттинче, çитмĕл те çичĕ тĕслĕ чĕлхе çинче, хура вăрман варринчи хура çĕлене хăçан куçпа хĕстерсе илет, çавăн чухне тин куç ÿктĕр",—тет.

Татăх нумай каласа карĕ. Калать-калать те сурать, калать-калать те каллех сурать. Çур алтăр сурсан, сурчăкне ĕçсе яма хушрĕ.

— Сурчăка кам ухмахĕ ĕçĕ!—терĕç ачасем.

— Эпир ĕçеттĕмĕр,—тавăрса хучĕ асатте.— Сывалас килетчĕ. Пуç ыратсан, пиçсе кайсан, скарлатина, грип, дифтери, тиф, шатра, ÿпнесăпан, кĕçĕ, варвитти ерсен юмăçăн сарă сурчăкне ĕçтеретчĕç.

— Тьфу!—йĕрĕнсе тутисене тытаççĕ итлесе тăракан пионерсем.

— Йĕрĕнетĕр! Ĕлĕк апла пулман. Ĕлĕк халăх валли хальхи пек больницăсем пулман. Пулсан та, шутсăр инçетреччĕ вĕсем. Халăх тĕттĕм пулнă, хут пĕлмен. Çырас вырăнне карт картаттăмăр.

— Карт? Мĕнлескер?

— Кăтартма пултаратăп. Акă хамăн кĕтÿçĕре çÿренĕ чухне картса пыни. Эпĕ кунта камăн миçе чун выльăхне пĕлме пĕр патак çине картса паллă туса пынă. Пĕр ĕнешĕн хăйне пĕр карт картнă, пĕр сыснашăн та çаплах. Икĕ качакашăн пĕр карт. Сурăхсене — 4 сурăхшăн пĕр карт картатăн. Çапла камăн миçе карт, унăн çавăн тăрăх укçа тÿлес пулать, çавăн чул талăк апат çитерес пулать. Шуçчăксем (кулаңай пуçтарма уйăрнă çынсем), кам мĕн чул кулаңай тÿленине пĕлме, çавăн пекех патаксем çине картса паллă туса пыратчĕç. Çапла шуçчăк та хут пĕлмесчĕ. Ялсенче культурлă учреждениÿсем пулман. Громкоговоритель вырăнне, дьякон пурччĕ. Сасси пит хулăмччĕ... Шăнтса пăрахсан, хина вырăнне, пилеш-йывăçпа сиплетчĕç. „Пилеш-йывăç, çак сивĕ чире манран уйăр; хăçан та хăçан çав сивĕ чир сан витĕр тухĕ, çавăн чухне тин мана ертĕр", тесе вăрманта çурăлса аннă пилеш витĕр тухатчĕç. Выльăхсене, чир ан çаклантăр тесе, пилеш-йывăç çинчен хĕрес туса çакса яратчĕç.

— Ветеринари çине куçрĕ!—терĕ пĕр пионерĕ кулса.

— Ветеринари çинчен кăна мар, агрономи çинчен те каласа пама пултарап,—терĕ хирĕç асатте, чемодантан пĕр карттин туртса кăларса.— Акă кунта ĕлĕк çĕрсене „искуснăй орошени" тунине кăтартнă.

— „Искусственнăй орошени" пуль?

— Апла пултăр эппин. Уя турăшсем йăтса тухса пупа молебен тутаратчĕç, „туршыв" саптаратчĕç, „искуснăй орошени" тутаратчĕç.

Итлесе ларакансем кулса яраççĕ.

— Çĕрĕç техники çавăн пек пулнă пирки, чухăнсемпе вăтамсен тырри хĕл сиввинчех ирĕлсе тăрса çуркуннеччен пĕтĕмпех ирĕле-ирĕле пĕтетчĕ, чăпта çапса илнĕ укçа кулаксенчен хаклă хакпа тырă илнĕ çĕре, кулаңай тÿленĕ çĕре тата пупсен кăсьине юхса кĕретчĕ. Перекет кĕллисем те пулăшмасчĕç.

— Мĕн вăл перекет кĕлли?—ыйтаççĕ ачасем.

— „Перекет кĕлли" тесе перекет паракан турра кĕлтуса йăлăннă сăмахсене калаттăмăр: „Тытнă çăнăх-кĕрперен перекетне, усăлăхне пар, тытнă тăвартан перекетне пар, ыйтнă укçаран перекетне пар", теттĕмĕр. Нумай, перекет кĕллисем.

— Апла сирӗн, вырӑсла каласан, „сберегательный бог“ пулнӑ. Ха-ха-ха!

Пионерсемпе пӗрле залра итлесе ларакан халӑх та кулать.

— Ҫапах перекет те, телей те ҫукчӗ. „Лаша таканӗ тупӑнни—телей пуласса систерет“, тетчӗҫ вара, телей шыраса аптӑранӑ чухӑнсем. Ҫавна ӗненсе эпӗ те ҫул ҫинче тупӑннӑ пӗр такана киле илсе тавӑрнӑччӗ. Акӑ вӑл такан!—Асатте чемоданӗнчен тутӑхса кайнӑ такан кӑларса кӑтартрӗ.—Ҫак такан сарайӗнче паянччен усраннӑ. Сире кӑтартма юрарӗ...

Залри халӑх алӑ ҫупать.

— Лаша таканне асӑннӑ май, ҫӑпата таканне кӑтартам-ха сире.—Асатте чемоданӗнчен йывӑҫ таканлӑ ҫӑпата туртса кӑларчӗ.—Ҫуркунне шӑнпа ҫӗтӗлесрен, урана шыв витесрен ҫӑпата тӗпне такан ҫӗлетчӗҫ. Урайӗнче тӗтӗм йӑсӑрланакан хура пӳртре пурӑнакан чӑвашӑн урине калуш кӗреймен. Ак ҫакна курни тата? — тесе асатте тепӗр япала кӑларса кӑтартрӗ.

— Мӗн ку?—тытсах пӑхаҫҫӗ пионерсем.

— Ҫавна хӑйчикки теҫҫӗ. Ялсенче авал краҫҫын та пулман, электричество та пулман. Хӑйӑ ҫутаттӑмӑр. Хӑйӑ чӗрсе ҫак тимӗр хушшине чикеттӗмӗр те ҫунтараттӑмӑр. Ҫутасса спичкӑпа мар, ак ҫак вутчулӗ ҫине ӑвӑ хураттӑмӑр та ҫулупа ҫапса вут-хӗмӗ кӑлараттӑмӑр. Сире тусах кӑтартам-ха,—асатте ҫулу кӑларса „вут ҫапма“ тытӑнчӗ.

... — Хӑйӑ чӗртме хӑтланса лӑп виҫӗ минут иртрӗ,—терӗ сехет ҫине пӑхса пӗр пионер.

— Вӑхӑта пӗлмелли сехетсем пулман,—терӗ ӑна асатте.— Сехет Сахрун кулакӑн анчах пулнӑ; сехет вырӑнне ун чухне хӗвел ҫине пӑхса пӗлнӗ, хӗвел курӑнман кунсенче кӑнтӑрла ҫитессине, каҫ пулассине хырӑм выҫнӑ тӑрӑх пӗлнӗ. Тепӗр майлӑ каласан, сехет вырӑнне хырӑм пулнӑ. Анчах хырӑмӗ те, пӗрмай выҫӑ пирки, улталанӑ. Ҫурҫӗр ҫитнине автансем авӑтнӑ тӑрӑх пӗлнӗ...

Нумайччен, ҫурҫӗр ҫитесси ҫур сехет юличчен пычӗ калаҫу. Суйлавҫӑсем, ӗлӗкхине аса илтернӗшӗн, асаттене тав турӗҫ.

— Ӗлӗкхине аса илтерни хальхи телейлӗ пурнӑҫа анлӑрах туйса илме май парать,—терӗҫ асаттене ал тытса хӑшӗсем.

Ҫавӑнпа асатте ялти лайӑх агитаторсен хисепӗнче тӑракан ҫын пулчӗ.

**Иван Мучи.**

# ӖНЕНМЕН ДИРЕКТОР

Пӗр ирхине Анат Кӑмашари (Ҫӗмӗрле р.) шкул директорӗ Балашов юлашки почтӑпа килнӗ хаҫатсене вуласа ларнӑ. Сӗтел ҫине ытла аванах ӳпӗнсе сӗвӗннӗскер, вӑл вуласа пынӑ-пынӑ та, такам пӗри систермесӗр вирелле тивертсе янӑ пек, тенкел хыҫӗ ҫине калт! кайса таяннӑ.

— Вот сана ме!—тесе, аллисене сарса пӑрахнӑ вӑл.—Суя! Суя корреспондент ман шкул ҫинчен элеклесе ҫырнӑ. Хӑҫан курнӑ вӑл ман шкулӑн вутӑ ҫуккине? Ачасем шкула йӗркеллӗ ҫӳремеҫҫӗ, тет. Пирӗн ачасем шкула ҫӳресси мӗнлине кама кӑтартнӑ эп? Пӗтӗмпех пӗлмесӗр ҫырнӑ, суя!

Ҫав вӑхӑтра ун патне пӗр учитель пырса кӗнӗ.

— Ман класри ачасем паян каллех пурте килмен,—тенӗ вӑл.

— Мӗн!—тесе, кӑшкӑрса пӑрахнӑ ӑна директор.—Эсӗ те ман ҫинчен элеклетӗн-и?

— Элеклесе мар. Ху пырса тӗрӗсле эппин: 82 процент анчах.

— Эсир пурте ман ҫине тӑратӑр!—тенӗ Балашов кӑмӑлсӑрланса.—Пӗри хаҫатра суять, эсӗ кунта ман ҫинчен элек саратӑн.

— Элеклесе никама та каламарӑм-ҫке эпӗ,—тенӗ учитель.—Ҫитменнине, эпӗ тӗрӗссине калатӑп. Ку ҫеҫ те мар, классем сивӗ, хваттерсем ҫитмеҫҫӗ.

— Суя. Вӗренӳ ҫулӗ тин пуҫланнӑ та, эпӗ ӑҫтан пурне те хатӗрлесе ҫитерем!—тенӗ Балашов, юлашкинчен.

Тӗрӗссипе, корреспондент та, учитель те суйман. Директор ҫеҫ хӑй те сивӗ канцеляринче ларнине ӗненесшӗн пулман.

**Ф. Зав-й.**

# „ҪУККИ ХУПЛАРӖ“



— Турӑпа унӑн ангелӗсен ушкӑнӗ чӑнахах та пулнӑ пулсан, вӗсем мана кандидата тӑрататчӗҫех пулӗ...

# СЕКРЕТ

I.

Шкултан таврӑннӑ чух Вассӑ Аннана хуса ҫитрӗ. Вӗсем пӗр-пӗринпе туслӑ, кӳршӗллӗ пурӑнаҫҫӗ, пӗр шкулта вӗренеҫҫӗ. Анчах, пӗр класра мар. Ваҫҫа—5-мӗш класра, Анна 4-мӗш класра ларать. Канмалли кунсенче пӗрле выляҫҫӗ.

— Эпӗ суйлав участкинче пулатӑп,—терӗ Ваҫҫа мухтанарах.

— Мӗнле?

— Каламастӑп!

— Суйлав участкинче эпӗ те пулма пултаратӑп. Унта пыма никама та чармаҫҫӗ. Суйлавҫӑсене пулӑшас пулать. Эпир санпа пулӑшма пултараймастпӑр.

— Эпӗ пулӑшатӑп, — терӗ каллех Ваҫҫа мухтанса.

— Мӗнне?

— Каламастӑп!

— Кала ӗнтӗ! Эпӗ сана вунсаккӑра ҫитсен суйлав прави парасси ҫинчен каларӑм вӗт,—тесе йӑлӑнса ыйтрӗ Анна.

— Вунсаккӑра ҫитсен суйлав прави илесси эпӗ тахҫанах пӗлетӗп. Суйлавҫӑсене мӗнпе пулӑшассине каламастӑп!—терӗ Ваҫҫа.

Ҫапла тавлашса килӗсене ҫитрӗҫ вӗсем.

— Ваҫҫа, каламастӑн-им? — тесе ыйтрӗ Анна тепӗр хут хапха умне ҫитсен.

— Каламастӑп. Секрет!—терӗ Ваҫҫа татса.

II.

Вӑл каҫ Ваҫҫа канлӗ ҫывӑраймарӗ: ирхине ҫывӑрса юласран хӑраса, темиҫе хутчен вӑранчӗ.

— Асатте, эсӗ ан ман, пирӗн санпа ирхине ултӑ сехетре суйлав участкинче пулмалла,—тесе аслашшӗне чӗнчӗ.

— Ҫывӑр ачам, ҫывӑр! Пилӗк сехетрех тӑрса кайӑпӑр,—тесе лӑплантарчӗ ӑна аслашшӗ.

Анна будильник сехетне пилӗк сехетре вӑратмалла туса пуҫӗ вӗҫне лартрӗ. Сехечӗ чаранса ан лартӑр тесе, икӗ хутчен вӑранса асӑрхарӗ. Ҫывӑрса кайсан та сехет шаккани хӑлхинчен тухмарӗ.

Суйлав кун пилӗк сехет ҫурӑра Анна суйлав участкинче. Вӑл Ваҫҫан секретне пӗлесшӗн тӑрӑшать. Ваҫҫа пырасса сыхлать.

Ирхине ултӑ сехетре суйлав участки алӑкӗ уҫӑлчӗ. Пуринчен малтан Ваҫҫа утмӑл ҫулхи куҫран вӑйсӑртарах аслашшӗне ҫавӑтса пырса кӗчӗ. Вӗсем тӳрех сӗтел патне пычӗҫ.

— Манӑн вӑрҫӑра аманнипе куҫсем пит курмаҫҫӗ. Хама сасӑлама пулӑшма хамӑн внука илсе килтӗм. Вӑл пионер, эпӗ ӑна шанатӑп,—терӗ аслашшӗ.

— Мучи, эсӗ ҫуранах килтӗн-ҫке. Эпир сана илме лаша ярасшӑнччӗ,—терӗ сӗтел хушшинче ларакан ҫын.

— Тавтапуҫ, ачам. Ман урасем ҫирӗп утаҫҫӗ-ха. Лашасӑрах аван ҫитрӗм,—терӗ старик хӑйне ырӑ суннипе хӗпӗртесе.

Анна ачасен пӳлӗмӗ алӑкӗ хыҫӗнчен, Ваҫҫан секретне пӗлесшӗн вӑрттӑн сыхласа тӑрать. „Халӗ Ваҫҫан секретне пӗлтӗм ӗнтӗ, вӑл аслашшӗне пулӑшма килнӗ“ тесе шухӑшларӗ.

Ваҫҫапа аслашшӗ сасӑласа пӗтерсен, тӳсеймерӗ Анна, чупса тухрӗ те:

— Эпӗ санӑн секретна пӗлтӗм. Эсӗ ман секрета пӗлместӗн,—терӗ савӑнҫӑлӑн.

Ваҫҫа тинкерсе пӑхрӗ.

— Эпӗ ачаллӑ хӗрарӑмсене хӑйсем сасӑличчен ачисене пӑхса пулӑшатӑп. Акӑ ман секрет,—тесе пӗлтерчӗ Анна.

Суйлав пӗтрӗ. Ваҫҫапа Анна мӗн вӑйӗсем ҫитнӗ таран суйлавҫӑсене пулӑшрӗҫ.

— Ӳлӗмрен эпӗ хамӑн секрета пытармӑп,—терӗ Ваҫҫа.

— Эпӗ те пытармӑп,—тесе килӗшрӗ Анна.

III.

Вӑл суйлавран вара чылай вӑхӑт иртрӗ ӗнтӗ. Халӗ ӗҫҫынни депутачӗсен вырӑнти Советне суйлама хатӗрленеҫҫӗ. Аннапа Ваҫҫа пӗрне-пӗри: секретсене пытармӑпӑр, тесе сӑмах панине ҫирӗп тытаҫҫӗ.

— Ваҫҫа, иртнӗ суйлавра эсӗ аслаҫуна—сасӑлама, эпӗ хӗрарӑмсен ачисене пӑхса пулӑшнӑччӗ. Ку суйлавра тата мӗнле пулӑшӑпӑр-ха?—терӗ пӗрре Анна шкултан таврӑннӑ чух.

— Эпӗ, суйлавҫӑсене кӑтартма чӑваш халӑхӗн ӗлӗкхипе хальхи пурнӑҫӗ ҫинчен каласа паракан альбом тӑватӑп,—терӗ Ваҫҫа.

— Ху альбом тума тытӑннӑ, мана каламастӑн,—терӗ Анна кӑмӑлсӑр.

— Эпӗ ӑна тума пуҫламан-ха. Малтан сана пӗлтертӗм. Унтан учительницӑпа каласса пӑхас, вӑл мӗн калӗ.

— Эпӗ вӗт альбомна туса пӗтернӗ пулӗ, тесе. Ку санӑн питӗ аван шухӑш. Альбом тума эпӗ те пулӑшӑп сана. Тата мӗнпе пулӑшӑпӑр-ха?

— Кун ҫинчен килте каласӑпӑр.

IV.

Пӗрре ирхине суйлав комисси секретарӗ Самаркин суйлав участкине пычӗ те тӗлӗнсех кайрӗ. Алӑк ҫумӗнче: „5-мӗш номерлӗ суйлав участки“ тесе пӗлтерекен хӑма ҫакӑнса тӑрать.

— Кам ҫырса ҫакнӑ кӑна ҫав тери илемлетсе?—тесе ыйтать суйлав комисси членӗнчен.

— Пӗлместӗп. Эсӗ кама та пулсан укҫа парса ҫыртарнӑ пулӗ тесе шутларӑм,—тесе ответлет секретарь.

Суйлав участки ӗҫлеме пуҫлани нумай пулмасть-ха. Кунӗпех халӑх, тулли. Суйлав комисси членӗсем ҫурҫӗр иртсен тин килӗсене саланаҫҫӗ.

Тепӗр ирхине каллех ҫӗнӗ япала суйлав участкинче. Стена ҫумӗнче темиҫе тӗрлӗ лозунгсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ.

— Ара, кун пек хитре лозунгсене кам ҫырса ҫыпӑҫтарнӑ пӗр каҫра?—тесе ыйтать Самаркин.

— Пӗлместпӗр,—ответлет комисси членӗ.

Ҫапла кашни кун суйлав участкинче улшӑнусем пулса пыраҫҫӗ.

— Иванов юлташ, камсем килсе ҫӳреҫҫӗ пирӗн суйлав участкине?—тесе ыйтрӗ Самаркин суйлав комисси председателӗнчен.

— Камсем пулччӑр. Пионерсем—Аннапа Ваҫҫа тата иккӗн-виҫҫӗн,—тесе пӗлтерчӗ Иванов.

— Ав камсем,—терӗ Самаркин.

Тепӗр кунне Самаркин Аннана тӗл пулчӗ те:

— Анна, чарăн-ха!
— Мĕншĕн?
— Эсир, пионерсем, пире пулăшнăшăн тав тăвас тетĕп-çке.
— Самаркин юлташ, эпир пионерсен вăйĕпе суйлав умĕн суйлавçăсене тата спектакль лартса пама хатĕрленетпĕр-ха,—тесе пĕлтерчĕ Васçа.

Суйлав участкине пырса кĕрсен, тухса каяс килмест, унта таса та хитре. Сĕтел çинче хулăм альбом выртать.

**М. Данилов—Чалдун.**


## „КАПКĂН"

**ЖУРНАЛА 1940 ÇУЛШĂН ÇЫРĂНСА ИЛĔР!**

**ЖУРНАЛ УЙĂХРА ИКĔ ХУТ ТУХАТЬ.**

**ХАКĔ:** Çулталăка—7 тенкĕ те 20 пус; 6 уйăха—3 тенкĕ те 60 пус; 3 уйăха—1 тенкĕ те 80 пус.

Почта уйрăмĕсемпе агентствăсенче çырăнса илме пулать.

Чăваш республикĕ тулашĕнчисем „Капкăн" çырăннă укçана çак адреспа куçарăççĕ:

Чебоксары. Дом Связи, Союзпечать.





— Эсĕ мĕншĕн юлашки вăхăтра пур тĕрлĕ словарьсемпе географи кĕнекисене те йăтса çÿретĕн? Пĕр-пĕр каçхи шкула кĕмерĕн-и?

— Шкулĕ каçхи шкулах та-ха. Суйлавçăсем патне каятăп. Вĕсем пур ăслăлăхсемпе те ыйтусем парăççĕ. Хăшпĕр чухне профессор та аптраса ÿкме пултарать.



# Кулас килет

## Мĕн мĕне пĕлтермест

** Киеври „Большевик“ заводри инструментсен цехĕнчи слесарь Козуля 42 минут ҫурăра 936 тенкĕ ĕҫлесе илни—вăл цехри сехет йĕппи ытти сехет йĕпписенчен ерипентерех ҫӳренине пĕлтермест.

** Куславкка районĕнчи „Динамо“ колхоз кĕрхипе ҫурхи тулă тата сĕлĕ кашни гектартан 20-шер центнер пухса илни—ҫав колхозăн хăйĕн ҫумăр пĕлĕчĕсем пулнине пĕлтермест.

** Ҫулавăҫри (Элĕк р.) „Октябрь“ колхозра тăракан Иванова ҫĕнĕ ҫултанпа—0,48, Федорова—4,26, Сорокин 40 ĕҫкунĕ туни—ҫав ҫынсем ҫиме юратманнине пĕлтермест.

** 1913-мĕш ҫулта 5521 ҫынлă пулнă. Шупашкар хули 1939-мĕш ҫулта 30 пин ытла ҫынлă пулни—вăл хулана ҫынсем уйăх ҫинчен ӳкнине пĕлтермест.

** Пинер вăрманпунктĕнче йывăҫ турттаракан Сретенский юлташ кашни кунах 50—60-шар тенкĕ ĕҫлесе илни—укҫа хыр тăрринче ӳснине пĕлтермест.

** Сĕнтĕр районĕнчи „КИМ“ колхозра Миловидов колхозник, 76 ҫулта пулин те, 145 ĕҫкунĕ туни—кăҫал ун ҫулĕ каялла чакса хĕрĕхе анса ларнине пĕлтермест.

** Пашьелĕнчи „Красная Нива“ колхозра (Шăмăршă р.) выльăхсем валли ăшă витесем ҫукки—хĕл сиввинче шăннă выльăхсем колхоз председателĕн (Матвеевăн): „ăшă витесем туса парăпăр, йывăҫсем пур“, тенĕ ăшă та ырă сăмахĕсемпе ăшăнма пултарнине пĕлтермест.

** Библиотекăсем валли уйăрнă укҫа-тенкĕрен пĕтĕм республикĕпе 10 уйăх хушшинче 47,2 процент ҫеҫ усă курни—кĕнеке хакĕсем 52,8 процент чакнине пĕлтермест.

** Комсомольский районти чылай шкулсем хĕл лариччен пĕр лав та вутă хатĕрлемении—вăл шкулсен директорĕсем шăнманнине пĕлтермест.

** Ҫĕмĕрле районĕнчи „Красноармеец“ колхозăн ялтан 4 километртра ларакан ферминче ĕҫлекенсене пурăнма ҫурт ҫукки—фермăра ĕҫлекенсем шăнсан килтен сăран хутаҫ ăшне чиксе пынă ăшăпа ăшăнма пултарнине пĕлтермест.

** Кутемерти „Трудовик“ колхоз (Октябрьский р.) хăмла пахчинчен кăҫал 18 пин тенкĕ тупăш илни—вăл колхоз хăй хăмлине укҫа тăпри ҫине лартса ӳстернине пĕлтермест.

——<□>——

## ТЕЛЕФОН ТĂРĂХ

Чăнкăр-чăнкăр чăнкăртаттартăмăр телефон шăнкăравĕпе Шупашкартан Трака.

Ыйтатпăр:

— Сирĕн райуполнаркомзаг (Леонтьев юлташ) районри сӳс-кантăр хатĕрлевĕн планне 5 процентран ирттерме тытăнчи?

— Паян тытăнма шухăшлать.

— Халĕ мĕн тăвать?

— Ир тăнă хыҫҫăн, шаравар тăхăнать.

Тепĕр кунтан каллех:

— Леонтьев юлташ сӳс-кантăр хатĕрлевне 5 процентран ирттерме тытăнчи?

— Тытăнать.

— Халĕ мĕн тăвать?

— Ҫăматтине тăхăнать.

Виҫҫĕмĕш кунне:

— Леонтьев юлташ сӳс-кантăр хатĕрлевне 5 процентран ирттерме тытăнчи?

— Тытăнать.

— Халь мĕн тăвать?

— Питне ҫăвать.

Тăваттăмĕш кунне:

— Леонтьев юлташ... 5 процентран ирттерме тытăнчи?

— Тытăнать.

— Халĕ мĕн тăвать?

— Питне шăлать.

Пиллĕкмĕш кунне:

— Леонтьев юлташ... пиллĕкрен иртме тытăнчи?

— Тытăнать.

— Халĕ мĕн тăвать?

— Пуҫне турать.

Улттăмĕш кунне сӳс-кантăр хатĕрлевĕ тĕлĕшпе мĕн туни ҫинчен ыйтмарăмăр, мĕншĕн тесен вăл кун (ноябрĕн 18-мĕшĕ) выходной пулчĕ.

## 10 çултан

Вунă çул хушши Шупашкарта пулман çын, Карл Маркс урамĕпе хăпарса Володарский урамĕ кĕтесси тĕлне çитсен, шухăша каять.

— Ĕлĕк çак рабфак çурчĕ пит пысăккăн курăнса ларатчĕ. Халĕ пĕхатăп та, пĕтĕмпех урăхла курăнать: вăл çурт пăчăртанса пĕчĕкленнĕ-ши? е юлашки çулсем хушшинче хамăр... ÿссе кайнă-и?

## Килти

— Арăму противогаз тăхăнма пĕлмест. Ма вĕрентместĕн?

— Ман вĕрентсе ларма вăхăт çук. Эпĕ Осоавиахим пуçламĕшĕ организацин секретарĕ пулатăп.

## Вĕри шыв

— Эп ĕçленĕ çĕрте час-часах вĕри шыв пулмасть.

— Ăçта ĕçлен вара эс?

— Мунчара.

## Сутаймасть

— Мĕтри, сан çĕрулми нумай пулас?

— Сахал мар. Çынсен чухлĕ пулчĕ.

— Çынсенчен нумайрах пулĕ. Çĕрулми сутма кашни пасарах тухатăн.

— Нумаях мар... анчах хам ыйтнă хака паракана тупаймарăм-ха. 12 пасара тухрăм, пĕр кило та сутаймарăм.

## Хăрать

**Чиркÿ старости:**—Ăçта каян?

**Пуп:**—Тухтăр патне. Шăл ыратать.

**Чиркÿ старости:**—Ма унтан каян? Тухтăр вăл енче мар, ку енче вĕт.

**Пуп:**—Приход çыннисем курасран хăрап.

## Ĕçсĕр аптрасан

— Ма эс паян нимĕн те тумарăн?

— Мĕн тăвасси çинчен шухăшласа лартăм.

## Çав-çав çĕрте, çав çĕрте...

Çав-çав çĕрте, çав çĕрте, Вăрнаркасси ялĕнче, Ÿпнер текен урамра Куккăр Куçма пурăнать, таварсемпе сут тăвать. Нумай унăн тусĕсем: çичĕ кумĕ ялпора, ултă хăти—ларексенче, икĕ хĕрĕ—раймагра, виçĕ кинĕ—продмагра, пĕр ывăлĕ—бухгалтер, хăй вăл—тăвар сутакан, тăвар илсе пухакан.

Пĕррехинче, йĕпе-сапа пуçлансан, ялпо тăварне сутнă çĕрте ĕçлекен продавец Кривокуров Кузьма тăвар магазинне „çур пăт“ туртакан çăрапа питĕрнĕ те, качаканни пек шĕвĕр сухалне шăлкаласа, килне таврăннă.

Пÿртре карчăкĕ, ывăлĕпе кинĕ автан ашне шăл айне хурса ÿркенчĕклĕн турткаласа ларнине курсан, Кривокуров шăртланнă пек пулнă.

„Килтинех пуснă ĕнтĕ. Хм... лектереймерĕм çав Петюка, „Птицекомбинатра“ ĕçлекен Марисçе. Ăна кин тунă пулсан, хĕлĕн-çăвĕн чăх ашĕ тапса туртса выртнă пулăттăмăрччĕ. А ку... ку мĕн кинÿ-качку!? Пĕр çăкăр-кулачă тăратнинчен урăх ним те çук“.

Арăмĕ ун çине ăшăран та ăшă куçĕсемпе пăхсан, Кривокуровăн икĕ йăлккам куçĕ тухса ÿкес пек выляма пуçланă. Кайран мĕн пулнине каласан...

Çав-çав çĕрте, çав çĕрте, Вăрнаркасси ялĕнче пурăнатчĕ пĕр этем, çаратнă вăл тем те тем... çав-çав çĕртен килнĕ, тет, унăн патне ухтару, тупнă, тет, ун патĕнче пусма-тавар темĕн чул.

**С. Мерчен.**

## ЙĂНĂШ МАР



— Эпĕ леш кварталти çав мăнттай çурта çитсе суйлавçăсен спискне тĕрĕслесшĕн. Нивушлĕ унта çичĕ суйлавçă çеç пулма пултарнă? Йăнăш пулĕ...

— Нимĕн те йăнăш мар. Унта ачасен ясли.

# ИВАН ШĂЛЛĔ

Иван киле тавăнманни нумай пулать. Килтисем ăна тахçанах кĕтеççĕ. Амăшĕ:—Тухса кайрĕ те килсе те курмасть!—тесе ятлаçать. „Мана та килсе курмастăн хуть“,—тесе кăмăлсăрланать шăллĕ юлашки çырăвĕнче.

— Кайса курас пĕрре,—терĕ вара Иван. Килтисем валли тĕрлĕрен парнесем туянчĕ. Хăй тухса килнĕ чухне унăн шăллĕ пӳ-çийĕпе ытлашши пысăках марччĕ, ăна ун чухне лутра кăна латакарах ача тесен те ытлашши пулмастчĕ. „Хама хунă пулсан, халĕ те таçта ӳссе кайман пуль-ха“, тесе шухăшларĕ ун çинчен Иван. Çавăнпа ӳн валли илнĕ костюмне кĕçĕнрех виçеллисенчен суйларĕ. Çапла тухса килчĕ вăл.

Станцирен анса килне çитиччен çанталăк шăнтма ĕлкĕрчĕ, юр аванах шатăртатма пуçларĕ.

Хăйсен чӳречинчен краççын çути курăнать.

— Максăм килтех пуль-ха, ну савăнтарап ĕнтĕ пĕрре!—тесе кĕçналăкне уçса кĕчĕ вăл.—Хăй мана мĕнпе кĕтсе тăрать-ши?

Пӳрте кĕрсен, вăл мĕнле те пулин урăх сăмах каличчен малтан, шăллĕ ăçта кайни çинчен ыйтса пĕлчĕ, мĕншĕн тесен шăллĕ, ăна мĕнпе те пулин кĕтсе тăма мар, хăй те килте пулмарĕ.

— Тухса кайрĕ те килеймерĕ-ха,—терĕ амăшĕ.

— Чупса çӳриччен, кĕнекине вуласчĕ!—терĕ Иван, хăйне кĕтсе тăманшăн шăллĕ çине кӳренсе.

— Таçта чупса çӳремест пуль те-ха,—терĕ амăшĕ,—суйлав умĕнхи пуху пулать, терĕç, çавăнта кайрĕ пулмалла.

— А-а,—терĕ Иван.

— Унта манăн та каймалла та-ха,—терĕ амăшĕ.—Эсĕ пымастăн пуль? Акă Максăмпа пĕрле сарса парам та, выртса кан эпир киличчен!

Çул çыннишĕн çемçе тӳшек çинчи ăшă ыйăхран лайăххи нимĕн те çук. Иван касса кайсах çывăрать. Çав тери ыррăн çывăрса тутлă тĕлĕксем курса выртаканскер, вăл чылай çĕрле вăранчĕ те, нимне ăнланса илеймесĕр, сехĕрленсе ӳкрĕ: унăн икĕ айккипе стена! „Ăçта çакланнă эп?“ терĕ вăл, хăранипе, сассине те кăлараймасăр. Çакăнта пĕр енчи стена хускалса ун çинелле йăванма пуçлани ăна, вăраннă пулсан та, ыйхăран тасалса çитейменскерне, пушшех хăратса пăрахрĕ. „Хурах!“ тесе мĕнпур вăйĕпе кăшкăрса ячĕ те Иван, тăна килсе кĕчĕ: пĕр енчи чăнах та стена—пӳрт стени, тепĕр енчи нимĕнле стена та мар, ăна тем сарлакăш хул-çурăмĕпе хăяккăн выртакан Максăм, ыйăх тĕлĕшпе, çавăн пек курăннă иккен. Вăл, меселе çаврăнса выртма тытăннăскер, Ивана пĕтĕмпех пусарса хучĕ.

— Ну, çитĕ, çитĕ ĕнтĕ! Хăвна курмасăрах юлатăп ак!—терĕ Иван, Максăма тĕртсе.

— Э?—терĕ Максăмăн ыйăхлă-хутăшлă сасси.

— Тетĕне ху курмасăрах вĕлерсе яратăн теп!

— Э-э...—терĕ Максăм, тин çеç вăранса кайса, тетĕш енне çаврăннă май, ăна тата та хытăрах хĕстерсе. Ун айĕнчен аран-аран хĕçĕнкелесе тухрĕ Иван.

— Мĕн мура ӳссе кайнă ку!—тесе тĕлĕнчĕ вăл, хăй умĕнче каска пек выртакан шăллĕ çине пăхса.—Чим-ха, Максăм-ши ку? Анне, Максăм-и ку ман çумра выртаканни?

— Максăм пулмасăр, кам пултăр тата,—терĕ амăшĕ, çăмăл ыйăхĕнчен час вăранса.

Иван кравать айне хунă чăмаданне туртса кăларчĕ те парнине хыпаланса илсе Максăма виçме пуçларĕ.

— Вот сана ме!—тесе, кутăн кайса ларчĕ вăл.—Костюмне эпĕ пĕчĕк Максăм валли илтĕм, кунта мĕн пысăкĕш выртать. Пăх-ха, анне, эпĕ ун валли илсе килнĕ костюм ăна пилĕк таран çеç, çаннисем унăн карта вĕрлĕкĕ пек аллисене ниепле те кĕрес çук!

Лăпкăн кулса выртать амăшĕ, унăн хăтланăвĕсем çине пăхса.

— Ахальтен мар кандидата тăратрĕç ĕнтĕ ăна!—терĕ вăл хаваслă кулăпа.

— Мĕнле кандидата?

— Ара халь суйлав кампанийĕ пырать вĕт.

— Вăра?

— Каçхи пухура ăна кандидата тăратрĕç.

— Мĕнле кандидата?

— Ара, хамăр ялсоветĕн депутатне суйлаççĕ ăна, хамăр касри суйлав округĕнчен.

— Максăма-и? Пирĕн Максăма-и?—ыйтрĕ Иван.

— Эсĕ пĕлместĕн-ха ăна,—терĕ амăшĕ,—вăл пĕвĕпе çеç мар, халăх çинче авторитечĕпе те пысăк.

Малалла вăл Ивана кăçал Максăм колхоз ĕçĕнчи дисциплинăна çирĕплетессипе мĕн чул пысăк ĕçсем туса кăтартни çинчен каласа пачĕ. Максăм кăçал колхозăн пĕр ĕçĕнчен те юлман, пур çĕре те çитнĕ, çĕр виçнĕ çĕрте пулнă, ĕç вăхăтĕнче культмассăллă ĕçе ертсе пынă, колхоза çĕнĕрен ĕне фермиуçма пулăшнă, халĕ суйлавçăсен хушшинче самай чаплă агитаторсенчен пĕри.

— Итле-ха, анне,—терĕ вара Иван,—пирĕн Максăм вĕренме пăрахман пуль-çке?

— Аса та илмен,—терĕ амăшĕ.—Кăçал вуннăмĕш класра вăл. Вĕренет те, çав вăхăтрах халăх çинче те темĕн чул ĕç тăвать.

— Ав мĕнпе кĕтсе тăрать мана вăл!—тесе кăшкăрса ячĕ Иван.—Эпĕ ун валли, пĕлмесĕр, юраман парне илсе килтĕм. Унăн парни... Ну, тăрхаль, Максăм, пулас депутатăн çывăрма юрамасть!

Вĕсен калаçуне пĕр сăмахне хăвармасăр итлесе выртнă Максăм вырăн çинчен темĕскер пек çĕкленчĕ те Иван тетĕшĕ умĕнче хапха юпи пек ӳссе тăчĕ,—пăхсан çĕлĕк ӳкмелле! Ăна лайăхрах чуптуса илес тесен, ачаранпах лутра çитĕннĕ Иванăн ун умне тенкел лартса тăмалла, çавăнпа та Максăмăн чуптунă чух чылаях пĕшкĕнмелле пулчĕ.

— Ух!—тесе, çурăмĕнчен кармашса çапрĕ Максăма Иван.—Костюмпа юраймарăм сана, кĕнекесемпе савăнтарам эппин!

— Мĕнле кĕнекесем?—терĕ Максăм хавасланса.

Иван чемоданне тепĕр хут уçрĕ.

— Акă сана парти историйĕ!—тесе пĕр кĕнеке тыттарчĕ вăл ăна.—Акă „Тихий Дон“ Шолоховăн! Акă „Американская трагедия“ Драйзерăн! Дикенс—„Оливер Твист“!, „История древней Греции“! „Давид Сасунский“!

— Тавтапуç пуриншĕн те!—терĕ Максăм, пĕр çĕклем кĕнеке йăтса.—Анчах эпĕ вĕсене пурне те

вуланă. Парти историне мĕн кĕнеки тухнăранпах вĕренетĕп, хамăн чăвашли те, вырăсли те пур.

— Тьфу!—аптăраса ӳкрĕ Иван.—А ăçта вуланă?

— Кăçал вулав çурчĕн библиотекине пуянлатрăмăр, тата хамăр шкулти библиотека та пысăк,— терĕ Максăм. — Анчах эпĕ вуламан кĕнекесем сахал вĕсенче.

— Тĕлĕнмелле санпа,—терĕ Иван,—хăвăн пӳ-çийӳпе манăн парнене прахăçа кăлартăн, халĕ тата кĕнекесемпе те юраймарăм иккен.

**Яккупа пĕр тăван.**

## Вăрттăн сасăлакансемпе уççăнах сасăлакансем

А. Чирков ӳкерчĕкĕ, Савир шухăшĕ.



**1-мĕш суйлавçă:** Эпир вăрттăн сасăлана хушăрах вĕсем ялсовечĕн кивĕ составĕшĕн уççăнах сасăлаççĕ.

**2-мĕш суйлавçă:** Камсем вĕсем?

**1-мĕш суйлавçă:** Авă ял вĕçĕнче пысăк çĕнĕ шкул ларать, ун çумĕнчех иртнĕ çул лартнă вулав çурчĕ, акă кунта çĕнĕ клуб, радиоузел, унта кăçал тунă пысăк мунча, çырмара çĕнĕ кĕпер...

*МАРК ТВЕН.*

# Мана губернатора мĕнле суйларĕç

Ку калава Америка писателĕ Марк Твен çырнă (1835—1910ç.ç.) Кунта вăл буржуаллă власть органĕсене суйланă чухне буржуазийĕн сутăннă пичечĕ капиталистсемшĕн юрăхсăр кандидата, тÿрĕ çынна, епле ирсĕррĕн элеклесе, вараласа пĕтернине, буржуаллă демократин „ырлăхĕсене" кăтартнă.

Темиçе уйăх маларах Нью-Иоркăн аслă штачĕ мана, независимăйсен спискĕ тăрăх мистер Джон Т. Смитпа мистер Бленк Дж. Бленк кандидатурисене хирĕç, губернатора суйлама кандидата кăларса тăратрĕ. Ку господасемпе танлаштарсан, манăн вĕсенчен иртекен пĕр пысăк аван ен—чыслă ятăм, лайăх репутаци пурччĕ, ăна лайăх пĕлсе тăраттăм эпĕ. Ырă ятпа усă курнин пахалăхне вĕсем хăçан та пулин пĕлнĕ пулсан та, вĕсемшĕн вăл вăхăт тахçанах иртнĕ иккенне хаçатсем тăрăх курма йывăр марччĕ. Юлашки çулсем хушшинче вĕсем намăса кĕртекен тĕрлĕрен киревсĕрлĕхсемпе паллашни уççăнах курăнса тăратчĕ. Анчах, çак лайăх енĕмпе савăннă май, хам противниксенчен вăрттăн кулкаланă самантрах, ман пысăк телейĕме темле вараланчăк юхăм пăтрата пуçларĕ: ман хушаматăм çак господасен хушамачĕсемпе çывăх тĕл пулкаласа илтĕне пуçларĕ. Эпĕ ытларан ытла пăшăрханма пуçларăм. Юлашкинчен çакăн çинчен асаннене çырса пĕлтертĕм. Вăл хăйĕн шухăшне мана питĕ хăвăрт та татăклăн çырса пĕлтерчĕ. Çапла çырчĕ вăл:

„Эсĕ пуранăç тăрăшĕнче хăвăнтан ху вăтанмалли пĕр намăс ĕç те туман—пĕрре те. Вуласа пăхха хаçатсене, вара Смитпа Бленк мĕнле господасем иккенне ăнланăн та, публика умĕнчех вĕсемпе тавлашма тытăнса хăвна-ху вĕсене çити ÿкерме хатĕрри—хатĕр марри çинчен хăвах шухăшласа пăхăн", тесе пĕлтерчĕ.

Шăпах ман шухăш! Ку каç эпĕ пĕр минут та çывăраймарăм. Анчах пĕрре тытăннă ĕçрен чакма юрамасть. Эпĕ хам çине обязательство илтĕм пулсан, малалла кĕрешме те тивĕç. Ирхине, апат тунă чухне хаçатсене пăшăрханса пăхкаланă май, эпĕ çак заметкăна тĕл пултăм,—ĕненсемĕр пурте—ку тери халиччен нихăçан та тĕлĕнменччĕ эпĕ:

„**Суя свидетель пулни.**—Мистер Марк Твен халĕ, халăх умĕнче хăй губернатора суйламалли кандидат пулса тăнă чухне, вăл 1863 çулта Вакаваккăра, Кохинхинăра вăтăр тăватă свидетель ăна хăй суя свидетель пулнине епле тăрă шыв çине кăларнине ăнлантарса пама кăмăл тăвĕ те-и, тен. Унчухне вăл, суя свидетель пулнипе, пĕр чухăн арăм-туземкăран тата унăн хÿтĕлĕхсĕр çемьинчен вĕсене выçă вилесрен хăтарса тăракан пĕртенпĕр пĕчĕкçеç банан ращине тăпăлтарса илесшĕн пулнăччĕ. Çак историе мистер Марк Твен хăйĕн умĕнче те, сассисене хăйĕн валли пухма тăрăшакан аслă халăх умĕнче те тĕпĕ-йĕрĕпех çутатса пама тивĕç. Тăвĕ-ши вăл çакна?"

Тĕлĕннипе, эпĕ шатах хытса кайрăм. Мĕн тери чунсăр, хаяр айăп! Кохинхинăна нихăçан та **курман** вĕт эпĕ! Вакаваккă çинчен ĕмĕрне те **илтмен!** Банан ращине кенгуруран та уйăра пĕлместĕп! Аптăранипе, эпĕ нимĕн тума пĕлмерĕм. Урсах кайрăм, анчах нимĕн тума та çук. Яра кун нимĕн тăваймасăр сулланса çÿрерĕм. Тепĕр ирхине çав хаçатах—ним ÿстермесĕр-пĕчĕклетмесĕр—чат çапла хыпар пичетлесе кăларчĕ:

„**Паллă факт.**—Çакна палăртмалла: Кохинхинăра суя свидетель пулни çинчен М-р Твен, пурте ăнланмалла, пĕр сăмах та чĕнмест".

(Асăрхаттарни.—Суйлав кампанийĕн пĕтĕм юлашки вăхăтĕнче çак хаçат мана „ирсĕр клятвопреступник Твен" тенисĕр пуçне урăх нимĕнле те чысламарĕ.)

Кун хыççăн, „**Хаçат**" çапла заметка пичетлерĕ:

„**Пĕлес килет.**—Губернатора суйламалли çĕнĕ кандидат хăйĕн согражданĕсенчен хăшне-пĕрне (уншăн сасăласа инкек курма тивĕçскерсене), çак пĕчĕк факта ăнлантарса пама кăмăл тумĕ-ши? Монтанăра унăн хăйпе пĕрле баракра пурăннă юлташĕсем хăшпĕр чухне вак-тĕвек япаласем çухаткаланă: савăнпа, çак япаласене шавах мистĕр Твен çинче е унăн „чемоданĕнче" (вăл хăй япаласене чĕркесе усракан хаçат айĕнче) тупкалама тÿрĕ килнĕ пирки, юлташĕсем ăна, хăйне усă кÿрес шутпах юлташлăн ÿкĕтлеме тивĕç пулнă,—тикĕтпе сĕрнĕ те ăна, чăх-чĕп тĕкĕ çинче йăвалантарса, шерте çине утлантарса хăваласа çÿренĕ; кайран вара ăна лагерьте пурăннă вырăнне яланлăхах пушатса хăварма канаш панă. Ăнлантарса парĕ-ши М-р Твен çак ĕç мĕнле пулнине?"

Кунтан ытларах юри ирсĕрлетнĕ суя пулма пултарнă-ши тĕнчере? Çуралнăранпа та пулман-çекха эпĕ Монтанăра!

(Çакăн хыççăн асăннă журнал мана яланах „Твен—Монтанăри вăрă" тесе чĕнетчĕ).

Халĕ ĕнтĕ хаçатсене эпĕ хăра-хăрах уçкаласа пăха пуçларăм,—одеяла сирсессĕн, ун айĕнче шăхăракан çĕлен чашкăрса тухассинчен хăрана пекех, хăратăп. Пĕррехинче куçăмсем манăн çакна курчĕç.

„**Суяна тивĕçлипех питленĕ!**—Пирĕн хисеплĕ знаменосецăн Бленк Дж. Бленкăн аслашшĕне, пурте куççульпе хуйхăрса асăнакансkере, аслă çул çинче вăрă-хурах пулса çÿренĕшĕн çакса вĕлернĕ, тенĕ М-р Марк Твенăн ирсĕр сăмахĕ пĕр вăтанмасăр каланă суя сăмах çеç пулни курăнчĕ; Файвпойнтери Эсквайр Майкел О. Флангăн тата Уотерстрирри мистер Кетти Меллинген çакна присяга йышăнса, хăйсен тÿрĕ сăмахне хут çине çырса çирĕплетрĕç. Политика тĕлĕшĕпе ăнаçлăхсем тăвас ĕмĕтпе хăшпĕр çынсем епле тивĕççĕр, çĕр айĕнче выртакан вилĕ çынсем çине тапăнса та пулин, вĕсен хисеплĕ ячĕсене суяпа вараласси патне çитиех ирсĕр хăтланаççĕ, çак ирсĕрлĕхе курма ырă çынсене çав тери йывăр. Çак ирсĕр суя вилнĕ çыннăн айăпсăр тăванĕсемпе тусĕсен чĕрисене мĕн тери çунтарни çинчен шухăшласассăнах, эпир тарăхса çитсе хаярланнă публикăна çак тивĕççĕр айăплакан çынна нимĕн законсă-

рах татăклăн тавăрма чĕнĕттĕмĕр. Анчах çук! Ан тив: ăна хăйĕн вĕтеленнĕ совеçĕ асаплантартăр (анчах, халăхăн хĕрӳ кăмăлĕ çие тухнă пирки, вăл, хăй çиллипе суккăрланса, тивĕççĕр айăплакан çынна мĕнле те пулин амантсассăн, çакна тăвакансене нимĕнле присяжнăйсем те айăплас çукки, нимĕнле суд та наказани парас çукки уççăнах курăнса тăрать)".

Юлашки чее сăмахсем пирки çийĕнчех çапла ĕç пулса тăчĕ: çĕрле эпĕ васкаса хам вырăн çинчен сиксе тăтăм та, хыçалти алăк витĕр килçуртран тухса тартăм, çав вăхăтра „тарăхса çитсе хаярланнă публика", тивĕçлипе пăлханнăскер, параднăй енчен алăксене çĕмĕрсе, мебельпе чӳречесене арката-арката пĕтерсе кĕрет, çĕклеме май пур япаласене çул май йăтса илсе каять. Çапах та эпĕ, аллăмсене библи çине хурсах, мистер Бленк аслашшĕне нихăçан та суя суйса айăпламан, тесе, калама пултаратăп. Вăл та сахал-ха: çак кунпа çак сехетчен ун çинчен нихăçан та илтменччĕ те, чĕлхе вĕçне те хурса асăнманччĕ эп ăна!

(Сăмах май çакна палăртса хăварам: асăннă журнал çакăнтан вара мана „Твен—вилнисене мăшкăл тăвакан" тесе чĕне пуçларĕ.)

Тепĕр хаçат статьи, ман шухăшăма хăй енне çавăраканни, çапла пулчĕ:

„**Савнă кандидат.**—М-р Марк Твен, независимăйсене митингĕнче çав тери çиллес, хаяр сăмах каламалла пулнăскер, митинга ĕнер каçхине вăхăтра çитеймерĕ. Врачĕ унăн телеграммăпа: ăна лашасем ĕрĕхсе кайса амантнă, урине икĕ тĕлтен хуçнă, мĕскĕн, çав тери хытă асапланать, тата ытти те, тата урăххи те, тата та тĕрлĕрен çавăн йышши ăсти-çук çырса пĕлтерет. Независимăйсем вара çак тивĕççĕр суяна епле те пулин асăрхамасăр ирттерме тăрăшрĕç, знаменосец вырăнне суйланă çухалнă этемĕ мĕншĕн килменнине **чăнахах** пĕлмен пек тума хăтланчĕç. Çĕркĕ М-р Твен пурăнакан **гостиницăна пĕр темле арçынна вил ӳсĕр çĕклесе кĕчĕç.** Независимăйсен çак ĕççе ӳсĕрĕлнĕ выльăх шăпах Марк Твен хăй пулманнине епле пулин те уççăн ăнлантарса памалла пулатех. Юлашкинчен хайхисене тытрăмăр-тытрăмăрах! Нимĕнле пăркаланса тăни те пулăшас çук ĕнтĕ кунта. Халăх сасси аслати пек кĕмсĕртеттерсе: „Кам пулнă çав арçын?"—тесе ыйтать".

Ман ятăма çав тери ирсĕр ĕçпе çыхăннине пĕр минутлăха ĕненмелле мар, ниепле те ĕненмелле мар пек туйăнса тăчĕ мана. Сăра-и, эрех и, е çавăн йышши спиртлă япала активсе пăхнăранпа виçĕ çулталăк иртнĕ-çке ха ĕнтĕ!

(Хăнаху мĕн тери вăйлине çак тĕслĕхрен курма пулать: хаçатăн тепĕр кунхи выпускĕнче хама çĕнĕ ятпа—„М-р Твен—Белая Горячка" тесе чĕннине,—халĕ ĕнтĕ хаçат мана çапла ĕмĕр иртичченех чĕнессине пĕлсе тăркачах,—эпĕ нимĕн кăмăлсăрланмасăрах вуласа тухрăм.)

Çак вăхăт тĕлне эпĕ илекен çырусем хушшинче суя ятпа алă пусса янă çырусем пысăк вырăн йышăна пуçларĕç. Форми вĕсен яланах çаплаччĕ:

„Хăвăр патăра ыйткалама пырсассăн, хăвăр хваттертен хăваласа кăларнă карчăк мĕнле пурăнать-ха сирĕн?

*Поль Прай.*"

Е:

„Сирĕн ирсĕр ĕçĕрсене манран пуçне никам та пĕлмест. Çакăнта алă пусакан çынна тав туса, ăна миçе доллăр та пулин кăларса парсассăн, сире лайăхрах пулĕ, ун пек тумасан, эпĕ камне хаçатсем тăрăх пĕлĕр.

*Генди Энди.*"

Çакăн майлăччĕ вĕсен шухăшĕ. Вулаканăн кăмăлĕ пулсан, ку тĕслĕхсене эпĕ вĕçĕмсĕрех тăсма пултаратăттăм.

Нумай та иртмерĕ, республиканецсен партийĕн тĕп хаçачĕ мана темĕн чухлĕ çынна взяткăсем панăшăн „айăпларĕ", а демократсен ертсе пыракан хаçачĕ, эпĕ çынсене хăратса тĕрлĕрен ирсĕр ĕçсем тунă, тесе, шухăшласа кăларчĕ.

(Çапла майпа эпĕ тата икĕ çĕнĕ ят илтĕм: „Твен—ирсĕр взяточник", „Твен—ирсĕр шантажист" тенине.)

Хама хăрушшăн айăпланисене хирĕç „ответсем" парас тĕлĕшпе çак вăхăт тĕлне çав тери тискер ахăрашу пуçланса кайрĕ, пирĕн партие ертсе пыракансемпе редакторсем ирĕксĕрех мана: малашне те чĕнмесĕр тăрсан, политика тĕлĕшĕнчен манăн пĕтмелле пулать,—терĕç. Вĕсем хушса каланă сăмахсене çирĕплетесшĕн пулнă пекех, тепĕр куннех пĕр хаçатра акă мĕн çырчĕç.

„**Пăхăр çак этем çине!**—Независимăйсен кандидачĕ халличчен те пĕр сăмах чĕнмест, мĕншĕн тесен вăл каласма хăяймасть. Ăна айăпланă айăпсем пурте тĕрĕс пулчĕç, вăл чĕнменни вĕсене татах та çĕнĕрен çирĕплетрĕ. Çапла ĕнтĕ, хальхи вăхăтра вăл ĕмĕрлĕхех айăплă çын пулса тăрать. Независимăйсем, пăхăр хăвăр кандидатăр çине! Пăхăр Ирсĕр Элеклекен çине! Пăхăр Монтанăри Вăрă çине! Вилнисене Мăшкăл тăвакан çине! Пăхса савăнăр „Белая Горячка" мĕлки çине! Хăвăрăн Ирсĕр Взяточникăр çине! Хăвăрăн Ирсĕр Шантажистăр çине! Пăхăр ун çине, лайăхрах виçсе хаклăр та ăна, калăр вара: хăвăрăн тӳрĕ кăмăллă сассăрсене эсир хăйĕн ирсĕр преступленийĕсемпе çак хăрушă ятсем илтме тивĕç пулнă тискер этеме, çитменнине тата пĕр преступленине те пулин хăйĕн çинчен сирес шутпа çăварне те уçма хăяйман çынна пама пултаратăр-и, çук-и?"

Ку сăмахсенчен пăрăнса юлма ĕнтĕ нимĕнле май та пулмарĕ, çавăнпа та эпĕ, тем тери намăсланса пусăрăннă кăмăлăмпа, çак нимĕнле сăлтавсăр айăпсемпе усал та ирсĕр суяна хирĕç „ответ" хатĕрле пуçларăм. Анчах ку ĕçе вĕçне çитерейменĕм эпĕ, мĕншĕн тесен ирхине хаçатра çĕнĕ ирсĕрлĕх, çĕнĕ хăрушлăх пичетленсе тухрĕ. Халĕ ĕнтĕ мана ăсран кайнă çынсене сыватакан çурта, чирлисене уямасăрах, йăлтах çунтарса янă, тесе, айăплама пуçланă; ку çурт мана хам килĕмрен тавраналла пăхма кансĕрленĕ пулать, имĕш! Ку ĕнтĕ мана чăннипех хăрата пуçларĕ. Унтан эпĕ тăван пиччене, унăн пурлăхне туртса илесшĕн, наркăмăш парса вĕлернĕ, пулать; çавăнпа çине тăрсах—ăна пытарнă шăтăка уçса пăхмалла, тесе айăплама тытăнчĕç. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех халран ячĕ мана. Çитменнине тата эпĕ, пăрахнă ачасене усрама илекен приютра попечитель пулса тăнă чухне, ку учреждени валли апат хатĕрлеме хамăн нимĕн пĕлмен ватă, шăлсăр хурăнташ-пĕлĕшсене тăратнă, тесе айăпларĕç. Эпĕ пĕрех май иккĕлене-иккĕлене тăтăм... Юлашкинчен вара, ушкăнлă çилĕ пирки мана пĕр намăссăр айăпланисен вĕçĕ çапла пулса тăчĕ: пĕрре халăхпа

митинг тунӑ чухне, эстрада ҫине тӑхӑр пӗчӗкҫеҫ йӑраланҫа ҫӳрекен ачасем, тӗслӗрен ӳтлӗскерсем, тӗрлӗрен ҫӗтӗк-ҫатӑк тумланнӑскерсем, чупса хӑпарчӗҫ те: атте! атте! — тесе кӑшкӑрса, мана урасенчен ярса тыта пуҫларӗҫ.

Урӑх вара чӑтаймарӑм эпӗ. Ялавӑма антартӑм та, парӑнтӑм. Нью-Йорк штатӗнче губернатора суйламалли суйлав кампанийӗн условийӗсене юрӑхлӑ пулаймарӑм эпӗ, ҫавӑнпа хам ятӑма кандидатсен списокӗнчен хуратма ыйтса, ҫиленнипе ҫапла алӑ пусса: „Сире хисеплекен — авал тӳрӗ, чипер ҫын пулнӑскер, а халӗ — И. Э., М. В., В. М. Т., Б. Г., И. В., И. Ш. — (Ирсӗр Элеклекен, Монтанӑри Вӑрӑ, Вилнисене Мӑшкӑл Тӑвакан, „Белая Горячка“, Ирсӗр Взяточник“, Ирсӗр Шантажист) — Марк Твен“, тесе алӑ пусса патӑм.

——<□>——

# СУДРА

Урлура Хӗлип ывӑлӗн куккӑшне Трахвин старике паян суд тӑваҫҫӗ. Халӑх сучӗн ирӗк пӳлӗмне чӑках колхозниксем тулса ларнӑ. Пӳлӗме вырнаҫайманнисем коридорта, юнашар пӳлӗмсенче тата, тем илтсе каплантарас пек, чӳрече умӗнчи юр ҫинче кӗпӗрленсе тӑраҫҫӗ. Урамри стариксен пуҫӗсем тӗлӗнче чӗлӗм тӗтӗмӗ йӑсӑрланать. Нумайӗшӗн пӳлӗмрисен те туртас килет пулас, вӗсем те тӑтӑшах табак хутаҫҫисене кӑларкаласа пӑхаҫҫӗ, анчах пӗри те тухасшӑн мар: вырӑнӗсене тытса илме пултараҫҫӗ.

Свидительсемпе обвинитель сӑмахӗсем тӑрӑх уҫҫӑнах курӑнчӗ: айӑплӑ Трахвин старик, хӑтӑлма хӑтланса нимӗн пӑркаланмалли те ҫук...

Защитник ятне асӑнсан, пурте Трахвин старикӗн сӑмахӗсене аса илчӗҫ пулас, сценӑ пекки еннелле ҫавӑрӑнчӗҫ (пуринчен ытла защитник сӑмахне итлеме пуҫтаранӑ та халӑх).

„Тӗнчере ҫук чаплӑ защитник тупрӑм. Сӑмахӗсем — пыл та ҫу. Вӑл ман пеккисене ҫеҫ мар, тискер вӑрӑ-хурахсене те ним мар ҫӑлса хӑварма пултарать... Хӑй пӑртак тӗрмере те ларса пӑхнӑ пулас“ тенӗччӗ ӗнер Трахвин старик.

Халӑх умне кивӗрех пальто тӑхӑннӑ кукша пуҫлӑ старик тухса тӑчӗ. Вӑл майӗпен те мӑнаҫлӑн ҫаврӑнкаласа сӑмси вӗҫне авӑнчӑк куҫлӑх ӳтлантарса лартрӗ те графинтен пӗр тӑрук виҫӗ стакан шыв ярса ӗҫрӗ.

„Пултарать ку“, терӗҫ халӑх хушшинче.

— Граждансем! — терӗ ҫакскер, куҫлӑхӗ урлӑ халӑх ҫине ҫӗнтерӳллӗн пӑхса. Сирӗн умра паян Телятников Трофим сирӗн судӑра кӗтсе ларать. Тӳррипех калӑпӑр: айӑпӗ пур унӑн пӑртак. Вӑл чип-чипер утса ҫӳрекен ула пӑру урине ҫапса хуҫнӑ. Анчах кам-ха ҫав айӑпланакан Телятников?

Итлесе ларакансем пӗр-пӗрин куҫӗсенчен пӑхкаласа илчӗҫ.

„Кӑна мӗншӗн ыйтать-ши тата вӑл? Ара, Трахвин старике пурте пӗлетпӗр ӗнтӗ. Вӑл „Хӗрлӗ Хӗвелтухӑҫ“ колхозӑн конюхӗ вӗт“, терӗҫ пулмалла вӗсем.

— Кам-ха ҫак сирӗн умра пуҫне чиксе ларакан ҫын? — терӗ защитник тепӗр хут, аллине артистла тӑратса. — Вӑл сирӗн мӗскӗн тӑванӑрах. Тӗттӗм те айван ҫын. Пӑхӑр-ха эсир ун ҫине! Тӗксӗм сӑнсӑпат, шӗвӗр янах, виҫ пӗрчӗ сухал... Вӑл ҫуралнӑранпа та савӑнӑҫ курман. Ирхине те, кӑнтӑрла та, каҫхине те ҫӗр ҫинче чакаланнӑ, анчах хӑйӗн ҫухалнӑ телейне тупайман, унӑн пӳлми тулса курман, ҫи-пуҫне вӑл ҫӗнӗ тумтир тӑхӑнайман, шеремет... Нивушлӗ шел мар вӑл сире, гражданcем!

Защитник ку тӗле ҫитсен, малти ретре ларакан ҫӗр те ултӑ ҫул та виҫӗ уйӑхри Ухиме карчӑк, кӳршинчен защитник мӗн калаҫнине ыйтса пӗлчӗ те, тутӑр вӗҫӗпе куҫӗсене шӑлкалама тытӑнчӗ.

— Ытла хаяр ҫынсем пулар мар, гражданcем! — карчӑк макӑрнипе хавхаланса тата ҫивӗчреххӗн кӑшкӑрма пуҫларӗ защитник. — Вӑл ӗмӗр тӑршшӗпех асапран тухса курайман. Халӗ те ҫавнашкалах. Хресчен ҫынни ҫуралнӑ кунран пуҫласа мӗн ҫӗре кӗричченех хӗнхур тӳсет. Аса илӗр-ха, мӗн калать ун пирки вырӑссен аслӑ поэчӗ Некрасов! — Ку тӗлте защитник ҫурӑлса каяс пек хӑпартланса тӑракан портфӗлӗнчен васкаса пӗр хулӑм кӗнеке туртса кӑларчӗ те, питне трагедилле артист пек туса, вулама тытӑнчӗ:

„Стонет он по полям, по дорогам,
В рудниках на железной цепи;
Стонет он под овином, под стогом,
Под телегой...“

Защитник хӗрсе кайса вулама тытӑннӑччӗ ҫеҫ, кӗтмен ҫӗртен пӗр тӗлӗнтермӗш ӗҫ сиксе тухрӗ. Халиччен лӑпкӑн кӑна итлесе ларнӑ Трахвин старик айӑпланакансен тенкелӗ ҫинчен ҫӗкленчӗ те сценӑ пекки ҫине хӑпарса тӑчӗ.

— Шӑп пул! — терӗ вӑл сасартӑк, защитник аллинчен кӗнекине туртса илсе. — Эпӗ мӗскӗн-и? Эпӗ хамӑн телее тупайман-и? Ман сӑн-пуҫ тӗксӗм-и? Суятӑн эсӗ! Элекҫӗ эсӗ! Эпӗ саншӑн намӑсланса пуҫа чиксе лартӑм. Манӑн пӳлме тулли тырӑ!.. Пӗр ывӑл — композитор, пире валли савӑнӑҫлӑ юрӑсем ҫырать, тепри — учитель, виҫҫӗмӗшӗ — судье, юнашар районта ӗҫлет. Манӑн тумтир те вӗрҫӗнех. Пур енчен те савӑнса пурӑнатӑп эпӗ, пурте ҫителӗклӗ манӑн. Некрасов поэт вӑл сӑмахсене пирӗн ҫинчен мар, пирӗн авалхи пурнӑҫ ҫинчен каланӑ. Пӑру ури хуҫнӑ пирки калас-тӑк — айӑплӑ эпӗ, йӑнӑш турӑм. А эсӗ — элекҫӗ, суян! Ме, хӑвна тивӗҫ укҫуна ил те, вӗҫтере пар кунтан, тасал! Эпир хамӑр хушӑра хамӑрах татӑлӑпӑр.

Алӑ ҫупмалли вырӑн мар пулин те, суда пуҫтаранӑ халӑх тӑвӑллӑн алӑ ҫупса ячӗ. Пуринчен те хытӑрах халӑх судьипе заседательсем алӑ ҫупрӗҫ.

**С. Матакин.**

——<□>——

# ЛАШИН ТЕ СЕХРЕ ХĂПНĂ

Исаклă районĕнчи (Куйбышев. об.) Сурат ял уй хапхи ишĕлсе аннă. Ăна юсасси çинчен никам та шутламасть.
(А. Филиппов)

А. Чирков ӳкерчĕкĕ.



—Ай-я-й, старик, яла çитсен çул пĕтрĕ-çке!

# КАПКĂН ТУС!

Тахçанах пĕрре, хăйĕн ачалăх кунĕсене урамра лашалла выляса çӳресе ирттернĕ чухне, Крылова пĕр ача патак паман. Унăн çав териех патак утланса сиккипе сиктерсе çӳрес кăмăлĕ пулнă. Кăмăлĕ таврăнсах кайнă вара ун. „Ну, эпĕ те кирлĕ пулăпха сана!“ тенĕ вăл ăна юнавлăн. Вара хайхи, пĕр пасарта ашшĕ панулми илсе парсан, леш ачи кунран пĕрне пама ыйтнă та: „Э-э,—тенĕ пĕчĕкçĕ Крылов,—манран мĕнле панулми илмеллине пĕлес пулать!“

Халь пысăкланнă ĕнтĕ Крылов, Тракра государство банкĕн пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Пысăк çын пулнă. Анчах, ача-пăча йăлисене халĕ те пăрахаймасть-ха, Капкăн тус!

Кăçалхи Октябрĕн 28-мĕшĕнче унăн государство банкĕн Çĕрпӳри отделенийĕнчен, укçа-тенкĕ чĕлхипе каласан, подкреплени илме каймалла пулнă. Çĕрпӳ хулине кайма вăл МТ Станцинчен трантаслă лаша ыйтать. Лере директор та, унăн заместителĕ те пулман, лашасем тин çеç çул çинчен килни çинчен пĕлекенни пĕр эпĕ кăначчĕ, тата МТС Крылова лаша пама тивĕçлĕ те мар. Çавсене пула, Крылова трантаслă лаша параймарăмăр.

— Ну, чим, вăхăт çитĕ!—тесе шăлне çыртрĕ вара Крылов.

Вăхăт çитрĕ. Закон тăрăх, МТС трактористчĕсене кашни уйăхрах пĕр ĕçкунĕ пуçне 2 тенкĕ те 50-шар пус укçа парса тăмалла. Кассир банка каять. Çав кун, октябрĕн 28-мĕшĕнче, Крылов ытти учрежденисене 50 пин тенкĕ укçа панă, а МТС трактористчĕсене пĕр пус та паман. МТС кассирне вăл: укçа парап тесе, хăй патĕнче пĕр кун тытнă. Кайран вара, ĕç вăхăчĕ тухсан, тутисене чалăштарса янă та, йĕкĕлтешсе: Крыловран укçа мĕнле илмеллине пĕлес пулать, а халь МТС-а кай!—тесе хунă.

Капкăн тус, манăн пĕлес килет: авалхи саманари ача-пăчасен йăлисене халĕ те пăрахман пуçлăхсем республикăра урăх пур-ши?

МТС аслă агрономĕ **М. Лукин.**

---

Ăнлантарса пар-ха мана: вырăссен пословицинче „Обещанного три года ждут“ (халалланине виç çул кĕтеççĕ) тени пичетленсе тухас изданисемпе те çыхăнать-ши? Сăмахран, „Чăваш чĕлхин çĕнĕ орфографине çирĕплетесси çинчен“ Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн указĕн 6-мĕш пунктĕнче çапла каланăччĕ:

«Çутĕç Халăх Комиссариатне тата Наукăпа Тĕпчев Институтне январĕн 25-мĕшĕ тĕлне шкулсем валли орфографи словарĕ хатĕрлесе çитерме, Чăвашгиза çак словаре 1939 çулхи мартăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пичетлесе кăларма хушас» тенĕччĕ.

Офографи словарĕ мартăн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр пичетленсе тухмалла. Унтанпа 9 уйăх иртрĕ. Чăвашгиз кăларма пулнă словарь магазинсенче паян кун та çук.

Тепĕр майлă каласан, çав паха та кирлĕ кĕнеке тухасса 9 уйăх кĕтрĕмĕр, асăннă пословицăра кăтартнă срок (3 çул) çитиччен тата чылай кĕтмелле (виçĕ çул 1942-мĕш çулта пулать). Кивелнĕ пословицăра кăтартнă срокчен ăна илесчĕ.

Вĕренекен **Семенова.**

# ИВАН ВАСИЛЬЕВИЧ ХИРĔÇМЕН

Шкул канцелярinче табак тĕтĕмĕ йăсăрланса тăрать. Унта вĕрентекенсемпе вĕренекенсем Осоавиахим членĕсен пуххине пуçтарăнса ларнă. Пуххи паçăрах уçăлнă ĕнтĕ вĕсен. Отчотне те итленĕ, самокритика йĕркипе тухса калаçакансем те пулнă. Акă халь организацине ертсе пыраканнине суйласа лартма кандидатсем тăратнă та вĕсем çинчен тухса калаçма пуçланă. Тăратнă кандидатсен спискинче Иван Васильевич тухсан, шкул директорĕ президиумран сăмах ыйтмасăрах сиксе тăрса калаçма пуçларĕ.

— Иван Васильча эпĕ суйламах сĕнетĕп, ырă çын вăл, нихăçан та ÿркенмен, нимĕнле йывăрлăх умĕнче те чарăнса тăма пĕлмен, хайĕн ĕçне чĕререн юратса тăвакан çын,—терĕ вăл.—Астăвăрха, хайне шанса панă класа мĕнле йĕркелесе ячĕ вăл!

— Тĕрĕс калать директор юлташ,—тесе сиксе тăчĕ Майзуров учитель,—тĕрĕс, унтан лайăх çын та çук, ĕçлеме пултарать, суйланма юрахлах вăл.

— Да-а, Иван Васильчран лайăх çын эпĕ хам та тупас çук,—терĕ Юрмин учитель, ыттисен сăмахĕсене çирĕплетсе.

— Чимĕр-ха эсир, юлташсем, йĕркипе, ыйтса калаçăр!—терĕ президиум председателĕ Шюрбин.

— Нимĕн калаçса тăмалли те çук ĕнтĕ унта,—терĕ ăна хирĕç Чуммин, ура çине сиксе тăрса,—Иван Васильч лайăх çын иккенне пурте лайăх пĕлсе тăраççĕ.

— Çапла, тĕрĕсех,—терĕ Имуллин та, пайсăр тăрса юлас мар шутпа.

Çапла списокри ятсем çинчен йĕркипе калаçса пычĕç, анчах пуринчен те лайăххи Иван Васильевич юлчĕ. Вара вăрттăн сасăланă результат та Иван Васильевича председатель туса хăварчĕ. Чăнах та тухса калаçакансем йăнăшмарĕç. Иван Васильевич хăй суйланнă кунтанах вăйне хурса ĕçлеме пуçларĕ. Ĕçĕ те часах курăнчĕ унăн. Пĕррехинче районра тухса тăракан хаçат çинче Иван Васильевич хайĕн ĕçĕпе районри осоавиахим организацисенчен пуринчен те мала тухса тăни çинчен çырса пĕлтернĕ. Çапах та Иван Васильевич, хăй уншăн хавасланнă пулин те, никам умĕнче те пĕр сăмах та каласа мухтанмарĕ. Ун вырăнне Иван Васильевича суйлакансем пикенсех мухтанчĕç вара.

— Пирĕн организаци районра чи малта пырать вĕт,—тет Майзуров.

— Эпир малта пуласси паллах ĕнтĕ вăл,—тет Юрмин.

— Епле эпĕ кадрсене суйласа илме пултарап,—тесе мухтанать директор.

— Эпир те пулăшнă-çке сана ку ĕçре,—теççĕ ыттисем.

Çак евĕр калаçусем вĕсен хушшинче час-часах пулкаласа иртнĕ, анчах ку калаçăва пĕр Иван Васильевич çеç хутшăнман. Унăн калаçăвĕ яланах ĕç çинчен пулнă. Нумай вăхăт иртнĕ-и, сахал-и, шкул канцелярinче каллех çав çынсемех табак тĕтĕмне йăсăрлантарса ларнă. Анчах хальхинче унта осоавиахимовецсем мар, СВБ членĕсем пуху тунă. Кунта та отчет итленĕ, руководитель начар ĕçлени çинчен тухса калаçнă, юлашкинчен çĕнĕ руководитель суйлама йышăннă. Каллех кандидатсен спискине тума пуçланă. Паллах, унта Иван Васильевич ячĕ кĕрсе юлмасăр хăталайман. Ун çинчен тухса калаçма черет çитсен, савăннипе пурте алă çупса янă.

— У-у, маттур çын вăл, маттур...

Кашнийĕшех ун çинчен хăй малтан тухса калаçасшăн пулнă. Анчах президиум председателĕ каллех директора малтан сăмах панă.

— Иван Васильевич пултарулăхне сăмахпа виçсе калама та çук ĕнтĕ,—тенĕ директор хайĕн сăмахне пуçласа,—хăвăрах куратăр, вăл осоавиахим ĕçне мĕнле йĕркеласе янине. Сăмах та çук, вăл çак ĕçре те пысăк çитĕнÿсем тăвĕ.

— Тĕрĕс!—çирĕплетнĕ ыттисем.

Çапла вара Иван Васильевич каллех суйланса юлнă. Халь ĕнтĕ икĕ ĕç унăн. Çапах та „ĕç нумай“ тесе йăнăшса тăмарĕ вăл, СВБ ĕçĕнче курăнмалла пысăк çитĕнÿсем тума пултарчĕ. Анчах, никам умĕнче те вăл „эпĕ икĕ ĕçпе те, çапах кая юлмастăп-ха“, тесе мухтанмарĕ. Çитĕнÿсемшĕн каллех Майзуров, Юрминсем мухтанчĕç. Виççĕмĕшĕнче çак канцелярinче учитель-комсомолецсен пуххи пулчĕ. Кун йĕркинче—пионервожатăй суйласа лартасси. Кунта та чи малтанах Иван Васильевичăн кандидатури çырăнса тăчĕ.

— Çук,—терĕ вĕсене хирĕçлесе Иван Васильевич,—капла темиçе ĕçпе ман ĕçĕмсен пахалăхĕ чакма пултарĕ, акă пирĕн кунта пĕр вĕрентÿ ĕçĕпе çеç ĕçлекен учитель-комсомолецсем те пур, çавсенчен пионервожатăйсем çирĕплетес.

— Çук, сан пек пултарулла комсомолец урăх çук пирĕн, эсех ку ĕçре пысăк çитĕнÿсем тăвăн,—тесе ответленĕ ăна.

Икĕ ĕç çумне виççĕмĕш ĕç хутшăннă Иван Васильевичăн. Ĕçлет Иван Васильевич.—Кая юлса намăса юлас мар,—тет вăл.

Тĕрĕс каларĕ Иван Васильевич. Вăхăт иртсе пычĕ, унăн ĕçĕ кая юлни курăнмарĕ. Комсомолецсен тепĕр пуххинче Иван Васильевича пурте хытă ырланă.

— Тĕлĕнмелле пултарулла çын Иван Васельевич, хастар комсомолец,—тенĕ вĕсем. Вара çавăнтах тахăшĕ кун йĕркинче ларакан ыйту тăрăх Иван Васильевича комсорга суйлама сĕнÿ панă.

— Вăл комсорг пулсан пирĕн мĕн пур ĕç малалла каясси паллах, ун чухне вара пирĕн шкул çумĕнчи комсомол организаци те малти вырăна тухса тăрĕ,—тенĕ вăл. Ыттисем те çавнах çирĕплетнĕ.

— Юрать эппин,—тенĕ вĕсене хирĕç Иван Васильевич,—сирĕн шухăшпа эпĕ килĕшĕп, анчах эсир мана ытти ĕçсенчен хăтарăр.

— Çук,—хирĕçленĕ ăна шкул директорĕ,—ку вăл эсир ертсе пыракан ытти кружоксен ĕçне чакарас тени пулать.

Ыттисем те директорпа килĕшнĕ. Иван Васильевич сăмахĕсене итлемен, ăна ытти ĕçсенчен хăтармасăрах комсорг туса хунă. Иван Васильевич ĕçленĕ, пĕр ĕçне те пăрахса хăварман. Хăйне канмалли вăхăт та сахалланнине сиснĕ вăл. Кашни кун 4—5 урок, уроксене хатĕрленесси, кусемсĕр пуçне тата тăвата общественлă ĕç.—Çапах та ĕлкĕрме пулать-ха, ĕçе кая хăварса хамăн ята

çухатмăп,—тенĕ Иван Васильевич, вара каллех ĕç-леме пуçланă.

Çапла лăпкăн ĕçлесе пурăннă вăхăтра Иван Васильевич патне райкомолтан машинкăпа пичетленĕ хут пынă. Вăл хут çинче Иван Васильевича комсомолецсен хушшинче пропагандист туса хуни çинчен пĕлтерсе çырнă пулнă. Вара Иван Васильевич хăйĕн ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут тарăхса кайнă.

— Мĕнле-ха капла, темиçе комсомолец ахалех çÿреççĕ, мĕнпур ĕçе ман çине тиеççĕ, епле-ха эпĕ ĕлкĕрем!—тенĕ вăл. Райкомола пырса кĕрсен те вăл çапла каланă, анчах ăна райкомолтисем хытă ятланă.

— Ĕçлес килмест пулсан, билетна кăларса пар эппин!—тенĕ ăна райкомол секретарĕ.

— Çук, билета эпĕ ниепле те пама пултараймастăп, ăна иличчен тата çакăн чул ĕç парăр пуччĕ мана,—тенĕ те Иван Васильевич, райкомолтан тухса кайнă. Пикенсех ĕçленĕ Иван Васильевич, анчах ĕç пахалăхĕ чакса пынă пек туйăннă ăна. Ĕç çапла вĕçленнĕ вара. Иван Васильевича „ĕçлеме пултарнă çĕртех, ĕç нумай тесе сăлтав тупса ĕçлеме пăрахса, ĕçсене кая хăварма пуçланăшăн“ выговор парса хăварнă.

* * *

Вулакан юлташăм, ку ĕç ăçта пулса иртнине каламарăм эпĕ. Хăвăр хушăрах пулмаççĕ-и сирĕн çак евĕр ĕçсем? Пулнă пулсан тÿрлетĕр. Пулман пулсан, пуласран сыхланăр.

**М. Аркай.**

## Сутса янă

Пирĕн ялти „Хĕрлĕ сухаç“ колхозра (Етĕрне р-нĕ) пĕрлешĕнмелли япаласене пурне те пĕрлештерсе çитересси çинчен колхозниксен пухăвĕнче уйрăм ыйту лартса сÿтсе-яврĕç. Çакăн хыççăнах колхоз председателĕ Ефимов Иван хăй килĕнче тахçантанпа пытанса тăнă тăрантасне тытнă та сутса янă. Таçта сутнă. Сирĕн пата пырса сутман-и?

**Н. Лукин.**

## Йăлт вĕренсе çитрĕ

Пирĕн Шатракассинчи (Сĕнтĕр р-нĕ) „Родина“ колхоз председателĕ Семенов кашни кунах тренировкăра пулать. Анчах, хăйĕн çан-çурăмне çирĕплетес тесе мар, теприсен шăм-шакне авкалантарас тесе.

Ку ĕç ăна питĕ килĕшнĕ. Çавăнпа вăл колхоз йĕтемĕ çине, ăна тытса çаврăннă картасем ăçтан килнĕ унтан шăтăк пулсан та, хурал тăратмасть, çав шăтăксенчен кĕрекен сыснасене хăех кая-кая хĕнесе килет. Çапла ĕнтĕ, Семенов председатель совместительство йĕркипе тата „хурал тăрать“.

Халиччен вăл, ялан тренировкăра пулса тĕл ыватма вĕренсе çитнĕскер, 18 сысна çапса пăрахнă. Хăй сăмахĕпе, вăл çапса пăрахнă сыснасем çак кунсенчех 50 пуçа çитмелле.

**Муççапа Паша.**

## Аптраса ÿкнĕ

Урока кĕни 25 минут иртнĕ. Класри ачасем пăлханма пуçланă. „Ăçта кайса кĕнĕ пирĕн Михаил Васильч?“ тесе ыйтнă вĕсем пĕр-пĕринчен. Пĕлекенсем пулман. Çавăнпа вĕсем хăйсемпе урок ирттермелли учителе шырама директор патне кайнă.

Шалтах аптăраса ÿкнĕ Иванов директор. Пĕр класа кĕрсе пăхнă,—Михаил Васильч пулман, тепĕрне кĕрсе пăхнă,—çук. Юлашкинчен, коридор варрине тухса тăнă та:

— Михаил Васильч!—тесе, сассине виç хут хăпартса кăшкăрса янă вăл.

— Мĕн!—илтĕннĕ канцеляринчен. Кĕрсе пăхаççĕ те,—унта Михаил Васильевич Голубев учитель доминолла выляса ларать. Иванов директор ăна ачашла-ачашлах урока кÿртсе янă.

Ку ĕç Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси шкулĕнче пулса иртнĕ.

— Ах, ку ĕç çинчен РОНО сисмесен юрĕччĕ!—тенĕ директор çавăн хыççăн.

**А. Павлов.**

**Секретарь и вып. редактор И. Илларионов.** **Зам. отв. редакт. В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Сдано в производство 25/XI-39 г. Подписано к печати 23/XII-39 г. Уполномоч. Чувашглавлита № 1960. Заказ № 752

Формат бум. 58×84¹/₈. Объем 2 п. л. Тираж 5700 экз. Изд. газ. „Чăваш Коммунĕ“, г. Чебоксары, тип. № 1 НКМП ЧАССР

Хакӗ 20 пус.



Ачи: — Анне! Сире ҫак лайӑх ҫул-йӗрсене тума пуринчен ытларах кам пулӑшр
Ялсовет-и, колхоз правлени и?

Амӑшӗ (*ҫул-йӗр секци членӗ*): — Пуринчен ытларах — суйлавҫӑсем.